Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

72 (8236) № * Юн кун, 2014 ҫулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 24-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Ĕҫ стажĕ – 45 ҫул

Ĕҫре хастаррисем

***Паянхи куна "Ударник" пĕрлешӳллĕ хуҫалăхра кĕрхи уй-хир ĕҫĕсем вĕҫленсе пыраҫҫĕ темелле. 1516 гектар ҫинчи тĕш тырăпа пăрҫа йышши культурăсене пухса кĕртнĕ ĕнтĕ, 120 гектар ҫинчи "иккĕмĕш ҫăкăра" та кăларса пухса пĕтернĕ. Ҫакă, паллă ĕнтĕ, чăн-чăн ҫĕр ĕҫченĕсен тăрăшулăхĕсĕр, пĕрлехи ĕҫшĕн чунне пама хатĕр ял ҫыннисен тимлĕхĕсĕр пулман.***

***Ҫакăн пек хастар ҫынсен шутне кĕртмелле эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Виталий Петрова та. Вăрманкасси ялĕнчен вăл, водитель. Пенсие тухнă пулин те, автомашина рульне алăран вĕҫертме шутламасть. Ĕҫ ҫи вăхăтĕнче "ЗиЛ" автомашина рулĕ умне ларать, ҫурхи е кĕрхи уй-хир ĕҫĕсем вĕҫленсен вара "Собольпе" рейса тухать. Хуҫалăхри ĕҫ стажĕ ветеранăн 45 ҫул.***

***Виталий Кириллович кăҫал та уй-хирте вырма ĕҫĕсем пынă вăхăтра хастаррисенчен пĕри пулнă. "Хир карапĕсем" патĕнчен йĕтемсем ҫине 900 тонна тырă турттарнă. Ҫĕр улми кăларнă чухне те тăрăшулăхпа палăрнă, 600 тоннăна яхăн турттарнă ăна.***

**В. ШАПОШНИКОВ** сăн ӳкерчĕкĕ.



Хутса ăшăтмалли тапхăр умĕн

## Хĕл кунĕсене хатĕрленсе

***Кĕрхи кунсен пĕрремĕш уйăхĕ вĕҫленсе пырать. Ҫанталăк юлашки вăхăтра хĕвеллĕ тăрать пулин те, кĕрхи йĕпе-сапапа сивĕ кунсем ҫитсе килесси пирки те манма юрамасть. Апла пулсан ҫурт-йĕре, хваттерсемпе вĕренӳ, культурăпа йăла, социаллă ытти объектсене хутса ăшăтмалли тапхăр пуҫăничен вăхăт нумаях юлмасть. Пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăх службисем ҫак тапхăра мĕнле хатĕрленсе кĕтсе илеҫҫĕ-ха? Ҫакăн пирки калаҫу пуҫартăм район администрацийĕн пуҫлăхĕн ҫумĕпе – капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин пайĕн пуҫлăхĕпе Владимир НИКИТИНПА тĕл пулнă май.***

**– Владимир Германович, хваттерсенче хăҫан батарейăсем ăшăнма тытăнĕҫ-ха?**

– Хваттерсемпе ытти объектсене хутса ăшăтма тытăнассипе ятарлă йĕрке ҫирĕплетнĕ. Таврари ҫанталăк 5 кун хушши 8 градус ăшă е унран каярах тăрать пулсан, централизациленĕ котельнăйсене ĕҫлеттерме тытăнма пăхнă. Ҫавăн чухне хваттерсене те, социаллă ытти объектсене те ăшă пыма пуҫăнĕ. Паян-ыранах хутса ăшăтмалли тапхăра пуҫăнасси пирки калаймастăп-ха. Хальлĕхе ҫанталăк ăшă тăрать.

**– Централизациленĕ майпа ăшă парса тăракан миҫе котельнăй ĕҫлеме тытăнмалла кăҫал? Вĕсене пурне те хутса ăшăтмалли тапхăр валли хатĕрлесе ҫитерме май килчĕ-и?**

– Юсавпа хатĕрленӳ ĕҫĕсене ҫу каҫа япăх мар туса пытăмăр. Кăҫалхи июнĕн 2-мĕшĕнчех район администрацийĕн "Муркаш районĕнчи топливăпа энергетика комплексне тата пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăха 2014 – 2015 ҫулсенчи кĕркуннехи – хĕллехи тапхăр валли хатĕрлесси ҫинчен" йышăнăвне кăларнăччĕ. Йышăнупа килĕшӳллĕн ответлă тапхăр валли хатĕрленессин ĕҫĕсене йĕркелесе пыма, объектсене хутса ăшăтмалли тапхăр валли мĕнле хатĕрлесе ҫитерни палăртма ĕҫ комиссийĕ йĕркелеччĕ. Унăн йышĕнче район администрацийĕн, акционерсен "Чувашэнерго" уҫă обществин Муркашри филиалĕн, акционерсен "Чувашская энергосбытовая компания" уҫă обществин Етĕрнери филиалĕн, Ростехнадзорăн Чăваш Республикинчи управленийĕн, газпа тивĕҫтерекен предприятин Муркашри филиалĕн тата ытти ответлă ҫынсем.

Топливăпа энергетика комплексĕн тата пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăхăн объекчĕсене хутса ăшăтмалли тапхăр валли хатĕрлесе ҫитерессине туса ирттермелли ĕҫсен планне ҫирĕплетнĕччĕ. Мĕн пур хатĕрленӳ ĕҫĕсене планпа килĕшӳллĕн туса пыма тăрăшрăмăр.

Хальхи вăхăтра централизациленĕ майпа ăшă парса тăракан ĕҫлекен котельнăйсем 16. Вĕсем пурте ĕҫе хатĕр ĕнтĕ. Ҫак котельнăйсенчен нумай хваттерлĕ 37 ҫурт ăшă илсе тăрать. Ку ҫуртсем Муркашра, Мăн Сĕнтĕрте, Ярапайкассинче, Ильинкăра, Ярославкăра, Йӳҫкассинче вырнаҫнă.

**– Владимир Германович, пысăкрах мĕнле юсав ĕҫĕсене туса ирттерме тиврĕ кăҫал хутса ăшăтмалли тапхăра хатĕрленсе?**

– Вак-тĕвек юсав тата хатĕрленӳ ĕҫĕсене пур котельнăйра та туса ирттернĕ. Вĕсем пурте ĕҫлеттерме тытăнма хатĕр ĕнтĕ. Пысăкрах юсав ĕҫĕсем пирки калас пулсан, Муркашри 1-мĕш тата 3-мĕш номерлĕ котельнăйсене икшер газ хуранĕ, Мăн Сĕнтĕр шкулĕн котельнăйĕнче, Мăн Сĕнтĕрти 1-мĕш номерлĕ блок котельнăйĕнче тата 2-мĕш номерлĕ котельнăйра хурансене юсанă.

**– Пурте пĕлетпĕр ĕнтĕ, хальхи вăхăтра централизациленĕ майпа ăшă парса тăракан котельнăйсене ĕҫлеттерни пысăк тăкаксемпе ҫыхăннă. Сухатусем пысăк. Ҫавна май ăшăшăн тӳлесси те ӳсет. Хваттерсемпе ытти объектсене харпăр хăй тĕллĕн хутса ăшăтмалла тăвассипе ĕҫсем мĕнле пыраҫҫĕ-ши районта?**

– Тăкаксемпе ҫухатусем пирки калани тĕрĕсех. Апла пулин те хваттерсене харпăр хăй тĕллĕн хутса ăшăтмалла тăвасси, вĕренӳпе культура тата социаллă ытти объектсем валли модульлă уйрăм котельнăйсем тăвасси йӳнех кайса лармасть. Ҫакă пысăк укҫа-тенкĕпе ҫыхăннă. Укҫине вара хваттерсенче пурăнакансен хăйсен кĕсйинчен кăларма, тĕрлĕ объектсем валли район бюджетĕнчен уйăрма тивет. Ҫавăнпа та пур ĕҫе те тăрук пурнăҫлама ниепле те май ҫук. Акă иртнĕ ҫул Чуманкасси шкулĕпе кунти ача садне хăйсен уйрăм котельнăйĕсенчен хутса ăшăтмалла туса ҫитерме май килчĕ. Кăҫал Москакасси шкулĕпе кунти "Колокольчик" ача садне хăйсен котельнăйĕсенчен хутса ăшăтма модульлă котельнăйĕсене хута яма пăхнăччĕ. Ахăртнех ку ĕҫсене хутса ăшăтмалли тапхăр пуҫланиччен вĕҫлеме май пулмасть. Ҫавăнпа та малтанлăха кунти тĕп котельнăйа ĕҫлеттерме тивет тесе шухăшлатпăр.

Пĕтĕмĕшле илсен коммуналлă службă хутса ăшăтмалли тапхăра хатĕр темелле. Халĕ тепĕр хут тĕрĕслев ĕҫĕсене туса ирттеретпĕр, тупса палăртнă вак-тĕвек ĕҫсене ҫийĕнчех пĕтерме тăрăшатпăр.

**В. ШАПОШНИКОВ** калаҫнă.

Лару

## Шупашкара 81 регионтан хăнасем килĕҫ

**Тунти кун Правительство ҫуртĕнче «Раҫҫей – спорт ҫĕр-шывĕ» форума тата Раҫҫей Президенчĕ ҫумĕнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕҫлекен канаш ларăвне хатĕрленсе ирттерес енĕпе ĕҫлекен республикăри йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕ иртрĕ. Унăн ĕҫне Чăваш Ен Пуҫлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăнчĕ.**

Спорт форумне хутшăнакансем валли культура мероприятийĕсемпе экскурсисем йĕркелесси пирки культура министрĕ Вадим Ефимов пĕлтерчĕ. Режиссерсен ятарлă ушкăнне йĕркеленĕ, пултарулăх ушкăнĕсене палăртнă, сценарисене хатĕрленĕ. Юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче Шупашкарти Хĕрлĕ тӳремре хула ҫыннисем валли «Спорт – пурин валли те» уяв иртĕ. Унта спортсменсем, артистсем, чи лайăх пултарулăх ушкăнĕсем хăйсен юрри-ташшипе, ăсталăхĕпе паллаштарĕҫ. Юпа уйăхĕн 8–11-мĕшĕсенче Спорт форумне хутшăнакансем валли театрсенче, концерт залĕсенче тӳлевсĕрех спектакльсем, концертсем кăтартĕҫ, музейсене те тӳлевсĕрех йышăнĕҫ.

Шупашкар хула администрацийĕн пуҫлăхĕ Алексей Ладыков Пĕтĕм Раҫҫейри ГТО нормативĕсене йышăнмалли Пĕрлехи куна йĕркелесси пирки каласа парĕ. Алексей Олегович пĕлтернĕ тăрăх тĕп ăмăртусем Шупашкарти «Энергия», «Труд» стадионсенче тата Юрă уйĕнче иртĕҫ. Авăн уйăхĕн 23-мĕшĕнче хулари предприятисемпе организацисенче ăмăртусем пуҫланĕҫ ĕнтĕ. Унта ҫĕнтернисем (кашни командăра 10 ҫын) финалта вăй виҫĕҫ. Юпа уйăхĕн 27-мĕшĕнче кашни шкултах ГТО нормативĕсене пурнăҫлас енĕпе ăмăртусем йеркелĕҫ.

Шупашкар хула администрацийĕ Спорт форумне хутшăнакансем валли 15000 калпакпа шарф хатĕрлĕ.

ЧР Пуҫлăхĕн Администрацийĕн ертӳҫи Александр Иванов пĕлтернĕ тăрăх республикăн тĕп хулинче Раҫҫей Федерацийĕн 81 регионĕнчен хăнасене йышăнмалла.

Информполитика министрĕ Валентина Андреева пĕлтернĕ тăрăх паянхи кун тĕлне республикăри массăллă информаци хатĕрĕсенче 9000 ытла материал кун ҫути курнă. Роликсене ҫĕнетсех тăраҫҫĕ. Халĕ хăнасем валли Чăваш Республики пирки буклет хатĕрлеҫҫĕ.

Йыхрав

## Сĕт фестивальне хутшăнăр

Сĕт тата сĕт продукчĕсене кăмăллакансене Шупашкар хули йыхравлать. Сентябрĕн 27-мĕшĕнче 10.00 сехетре "Николаевский" суту-илӳ комплексĕнче виҫҫĕмĕш фестиваль уҫăлать. Ăна Чăваш Республикин Ял хуҫалăх министерстви йĕркеленĕ. Ҫакă сывă пурнăҫ йĕркине пропагандăлама тата ҫак продукта ытларах хаклама вĕрентме, хамăр патри паха продукци ҫине ытларах тимлĕх уйăрма пулăшмалла.

Кунта тĕрлĕ мероприяти ирттерме палăртнă. Аслисемшĕн те, кĕҫĕннисемшĕн те кăсăклă чылай: хаваслă те, техĕмлĕ те. Ачасем сăн ӳкерчĕк тăвассипе, сăвă йĕркисем шăрҫалассипе ăмăртĕҫ. Ăсталăхпа палăрнисем парнеллĕ пулĕҫ, уйрăм ĕҫсене ятарлă стенд ҫине вырнаҫтарĕҫ. Аслисем те тĕрлĕ конкурса хутшăнĕҫ, концерт пăхма май пулĕ.

Фестивале хутшăнакан кашни ҫын сĕт продукчĕсенчен хатĕрленĕ апат-ҫимĕҫ тутанма тата туянма пултарать. Сĕт продукчĕсемпе косметикăра та анлă усă кураҫҫĕ. Кăсăкланакансемшĕн косметолог, врач канашĕсем вырăнлă пулĕҫ.

Асăннă фестивале Мускав хулинчен "Союзмолоко" пĕрлĕхĕн ертӳҫи Андрей Даниленко хутшăнма палăртнă. Вăл асăннă продукт туса илекенсен шухăш-кăмăлне шута илĕ. Район администрацийĕн экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕн пайĕ пĕлтернĕ тăрăх фестивале Суворов яч. хис., Ильич. яч. хис. хуҫалăхсем, "Свобода" хуҫалăх тата "Путь Ильича" агрофирма хутшăнма палăртнă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

## Граждансене йышăнать

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче 12 сехет те 30 минутран тытăнса 14 сехетчен Муркаш районĕн прокуратуринче (адресĕ: Муркаш, Мир урамĕ, 6-мĕш ҫурт) граждансене хăйсене интереслентерекен ыйтусемпе Раҫҫей Федерацийĕн Следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи следстви управленийĕн ертӳҫин ҫумĕ Е.Н. Тумандейкин йышăнать. Йышăнăва 8(8352)66-24-56 номерпе шăнкăравласа ҫырăнмалла.

**28 сентября 2014 года проводится осмотр пациентов врачом-офтальмологом МНТК «Микрохирургия глаза» им. академика С.Н. Федорова в оптике «Гранд».
Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 15.
Запись по тел.: 8-967-475-87-57.**

# Ĕçлĕ тĕл пулусемпе пĕлтерĕшлĕ килĕшÿсем

## Сочири инвестици форумĕнче

***Сентябрĕн 19 – 20-мĕшĕсенче Сочире Пĕтĕм тĕнчери "Сочи – 2014" инвестици форумĕ иртрĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе унта республика делегацийĕ те хутшăннă. Унти тĕл пулусем ĕçлĕ лару-тăрура иртнĕ, форумра республикăшăн пĕлтерĕшлĕ килĕшÿсем тума, малашлăх ĕçĕсене палăртма май килнĕ.***

***

**Сентябрĕн 19-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей Перекет банкĕ йĕркеленĕ "Бюджет шайлашăвĕ е ÿсĕм хăвăртлăхĕ: суйласа илме вăхăт мар-и?" ĕç калаçăвне хутшăннă.**

Макроэкономика тăнăçлăхне тивĕçтерессин ыйтăвне сÿтсе явнă çĕре РФ Правительствин вице-премьерĕсем Ольга Голодец тата Аркадий Дворкович, Раççей Федерацийĕн финанс министрĕ Антон Силуанов, экономика аталанăвĕн министрĕ Алексей Улюкаев тата официаллă ытти çынсем хутшăннă. Мероприятие "Раççей перекет банкĕ" ОАО правленийĕн президенчĕ тата председателĕ Герман Греф хутшăннă.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев журналистсен экономикăна ÿсĕмлĕ аталантарассипе, республикăн инвестици илĕртÿлĕхне ÿстерессипе çыхăннă ыйтăвĕсене хуравланă май ĕç-хĕл ăнăçулăхĕ ытларах бюджет шайлашуллă пулнипе çыхăннине палăртнă. Çавăнпа та республика бюджетĕнче программа тата тĕллевлĕ майпа финанслассине пăхса хуни питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Çавăн пекех экономика кăтартăвĕсене лайăхлатас тесен обществăпа политика тĕлĕшĕнчи лару-тăру тăнăç пулни кирлĕ.

***

**Çав кунах Михаил Игнатьев "РЕНОВА" компанисен ушкăнĕн правленийĕн председателĕпе Алексей Московпа тĕл пулнă.** Тĕл пулăва Чăваш Ен Экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин, "РЕНОВА" ГК правленийĕн председателĕн çумĕ Ринат Халиков, "Корпорация развития Чувашской Республики" ОАО директорĕ Евгений Федоров хутшăннă.

Енсем Шупашкар хулин аэропортне реконструкцилессине регионсенчи аэропортсене аталантарассин программине кĕртессин условийĕсене ("Аэропорты регионов" УК ЗАО пурнăçлать), "Хĕвел" ООО ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă ыйтусене сÿтсе явнă, "Химпром" ОАО производство хăвачĕсемпе туллин усă курассин ыйтăвĕсене тишкернĕ. Вăл шутрах "Çулталăкне 50000 тонна водород перекисĕ туса кăларакан производство строительстви" инвестици проектне пурнăçа кĕртесси пирки те сăмах пынă. Ăна хута яма 2,5 млрд. тенкĕ инвестицисем хывма палăртнă. Алексей Москов технологи тĕлĕшпе кăткăс асăннă проект 2015 çулта ĕçлеме тытăнасса шанни пирки пĕлтернĕ.

***

**Сентябрĕн 19-мĕшĕнче Михаил Игнатьев "Раççей Европăпа Ази хушшинче: хальхи условисенчи регионăн çĕнĕ политики" темăпа иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери XIII инвестици форумĕн пленарлă ларăвне хутшăннă.** Форума хутшăнакансем умĕнче Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕ Дмитрий Медведев тухса калаçнă. Вăл Раççейре экономика тата политика пурнăçĕнче палăрămлă улшăнусем пулса иртнине палăртнă. Стратегиллĕ партнерсем улшăнаççĕ, çĕнĕ рыноксем йĕркеленеççĕ. Китайпа, Японипе, Индипе хутшăнусем аталанаççĕ.

Чăваш Енре хамăрăн ял хуçалăх продукцине туса илекенсене пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерме тăрăшаççĕ, ют çĕр-шыв продукцине ылмаштармалли майсене ĕçе кĕртеççĕ. Республика Китайпа пĕрлехи проектсене ĕçе кĕртет.

Пленарлă лару хыççăн "Обязательствăсене пурне те мĕнле пурнăçламалла тата ÿсĕмсем тумалла" темăпа панель дискуссийĕ иртнĕ. Ăна Раççей Правительствин вице-премьерĕсем Ольга Голодец тата Аркадий Дворкович ирттернĕ.




Пурнăçăн пĕлтерĕшлĕ енĕсенчен пĕрне – социаллă сферăна аталантарассин малашлăхĕн ыйтăвĕсене тишкернĕ. Çĕр-шывра ятарлă премии туса хунă. Ăна регионсен социаллă аталану программисен Пĕтĕм Раççей конкурсĕн итогĕсем тăрăх параççĕ. Ку конкурса "Лекотека – вăйă территорийĕ" проектпа Чăваш Ен те хутшăннă. **Ольга Голодец пĕлтернĕ тăрăх "Çынлăх" номинацире Чăваш Республикин проектне чи лайăххи тесе палăртнă, вăл Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева çĕнтерÿçĕ Дипломне панă.**

***

**Сентябрĕн 19-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата "Раççей Перекет банкĕ" ОАО правленийĕн президенчĕ тата председателĕ Герман Греф Раççей Перекет банкĕпе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ килĕштерсе ĕçлесси пирки килĕшĕве алă пуснă.** Чăваш Еншĕн пĕлтерĕшлĕ инвестици проекчĕсене пурнăçа кĕртме Раççей Перекет банкĕ укçа-тенкĕпе пулăшма шантарать.

Килĕшĕве алă пуснă хыççăн журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май Герман Греф çавна палăртнă. Чăваш Ен кризис вăхăтĕнче ипотекăна субсидилессин опычĕпе усă курнă регионсенчен пĕри пулнă. Ку опытпа усă курса халĕ кун пек килĕшÿсене федерацин пур субъекчĕсемпе те тума тытăннă. Çавна май пурăнмалли çурт-йĕр туянассинче ипотекăпа усă курасси 10 – 11 процентран 30 – 35 процента çитнĕ.



"Алă пуснă килĕшÿ регион экономикишĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăракан инвестици проекчĕсене пурнăçа кĕртме май парĕ. Раççей Перекет банкĕ пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ Чăваш Ен Правительствипе тухăçлă çыхăнса ĕçлет. Асăннă килĕшĕве пурнăçа кĕртни регионa малашлăх çулĕпе ăнăçлăрах утăмлама май парĕ", – тенĕ Герман Греф.

Чăваш Енре пурăнакансен ипотека кредитне шанаслăхĕ ÿссе пынине республика Пуçлăхĕ те палăртнă. Кредита патшалăх 4 процент субсидилени ипотека кредичĕн потребительсен рынокĕнчи хакне чакарать, çамрăк çемьесене, пысăк мар тупăшлă çемьесене хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма май парать.

***

Форумăн пĕрремĕш кунĕ Чăваш Ен делегацийĕшĕн чăннипех те тухăçлă пулнă. **Сентябрĕн 19-мĕшĕнчех Раççейăн виçĕ регионĕпе – Севастополь хулипе, Ставрополь крайĕпе тата Ямало-Ненецк автономи округĕпе килĕштерсе ĕçлесси пирки килĕшÿсене алă пуснă.** Килĕшÿсене алă пуснă май çавна палăртнă: регионсен пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлемелли, пĕрлехи çул-йĕр çук мар.

***

**Сентябрĕн 20-мĕшĕнче Михаил Игнатьев "Раççей пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхĕ: харпăр хăй инвестицилессин çĕнĕ условийĕсем" панель дискуссине хутшăннă.** Ыйтусене сÿтсе явнă çĕре Раççей Правительствин вице-премьерĕ Дмитрий Козак тата Раççей Федерацийĕн строительство тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕ Михаил Мень те хутшăннă.

***

**Сентябрĕн 20-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев рейтинг комитечĕн усă ларăвне хутшăннă.** Унта Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенчи инвестици лару-тăрăвĕн наци рейтингĕн пилот тапхăрĕн итогĕсене тишкернĕ. Рейтингăн пилот тапхăрне Раççей Федерацийĕн 21 субъекчĕ хутшăннă. Рейтинг 54 кăтартуран тăрать.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ хăйĕн сăмахĕнче çавна палăртнă. Асăннă рейтинга пула федераци субъекчĕсен хăйсен вăйлă тата хавшак енĕсене объективлă мĕнле хак пани пирки тĕрĕс информаци илме май пур. "Чăваш Енĕн çут çанталăкăн пысăк ресурсĕсем çук. Чи пĕлтерĕшли пирĕншĕн – çын тата интеллект капиталĕ. Эпир инвестицисене çынсем валли хыватпăр", – тенĕ Михаил Игнатьев. Çавăн пекех вăл ĕç рынокĕн мониторингне тăтăшах ирттерме кирлине палăртнă. Чăваш Ен вара инвестици лару-тăрăвĕн наци рейтингне хутшăнма хатĕр.

***

**Сентябрĕн 20-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата РФ промышленноç тата суту-илÿ министрĕ Денис Мантуров Раççей Федерацийĕн Промышленноç тата суту-илÿ министерствипе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ промышленноç политикин сферинче тата суту-илÿ ĕçĕ-хĕлĕ енĕпе килĕштерсе ĕçлесси пирки килĕшĕве алă пуснă.** Енсем палăртнă тăрăх çакă çĕнĕ индустрисене аталантарма, пысăк технологиллĕ çĕнĕ производствăсем йĕркелеме инвесторсене ытларах явăçтарма пулăшма тивĕç.




**Çавăн пекех сентябрĕн 20-мĕшĕнче Михаил Игнатьев Крым Республикин Пуçлăхĕн ĕçĕсене вăхăтлăх туса пыракан Сергей Аксеновпа суту-илÿпе экономика, наукăпа техника, социаллă тата культура енĕпе малашне килĕштерсе ĕçлесси пирки Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕпе Крым Республикин Министрсен Канашĕ хушшинчи килĕшĕве алă пуснă.**

Килĕшĕвĕн тĕп тĕллевĕ – регионсем хушшинчи çыхăнусене çирĕплетме кирлĕ йĕркелÿ, экономика тата право условийĕсене туса хурасси.

***

**Унччен палăртса хунă протокол мероприятийĕсене хутшăннисĕр пуçне инвестици форумĕ пынă кунсенче Михаил Игнатьев актуаллă тĕрлĕ ыйтусемпе Раççей Федерацийĕн Правительствин членĕсемпе тĕл пулнă.** Раççей энергетика министрĕпе Александр Новакпа, строительство тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕпе Михаил Меньпе, транспорт министрĕпе Максим Соколовпа тĕл пулусем ĕçлĕ лару-тăрура иртнĕ.

## Саламлатпăр



Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăра – Юнкăпуç ялĕнче пурăнакан **Галина Михайловна НИКИТИНĂНА** 55 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Çĕр çинчи мĕн пур ырри сан валли пултăр, чир-чĕр санран пăрăнса ирттĕр, кĕрекÿ ялан тулăх пултăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтÿсем çитсе пыччăр, çемье вучахĕ тикĕссĕн ялкăштăр. Çумра яланах шанчăклă çынсем, умра çутă та ырă кунсем пулччăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ.**



Хаклă мăшăра, аннене, асаннене – Чамăш ялĕнче пурăнакан **Раиса Ананьевна БЛИНОВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Тĕнчери мĕн пур ыррине сунатпăр сана – çирĕп сывлăх, тулăх пурнăç, тулли телей, ăнăçу. Утас çулу яланах такăр пултăр, шухăшланă ĕмĕтÿсем пурнăçланса пыччăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

**Пысăк салампа: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрÿшĕсем, ывăлĕпе кинĕ тата 8 мăнукĕ.**

Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Сарчак ялĕнче пурăнакан **София Егоровна ЕГОРОВА** сентябрĕн 25-мĕшĕнче 85 çул тултарать. Çак паллă кунпа ăна Розăпа Володя Степановсем, вĕсен ачисем Катя тата Дима чун-чĕререн саламлаççĕ, ырлăх-сывлăх, вăрăм кун-çул сунаççĕ.



Чамăш ялĕнче пурăнакан юратнă инкене – **Раиса Ананьевна БЛИНОВĂНА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр, ăна çирĕп сывлăх, çемьере телей сунатпăр, унăн çулĕ çинче лайăххи кăна тĕл пултăр. Мĕн шутлани пурнăçланса пытăр, тĕллевĕрсем çитсе пыччăр.

**Саламлаканĕсем: Ивановсен, Николаевсен çемйисем.**

## Объявления

**Постановление главы Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики №6 от 22.09.2014 года**

О проведении публичных слушаний по проекту муниципального правового акта "О ходатайстве перед Кабинетом Министров Чувашской Республики о переводе земель сельскохозяйственного назначения в другие категории земель"

В соответствии со ст. 28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003г. №131-ФЗ "Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации", ст. 14 Устава Москакасинского сельского поселения Моргаушского района постановляю:

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта "О ходатайстве перед Кабинетом Министров Чувашской Республики о переводе земель сельскохозяйственного назначения в другие категории земель" 02 октября 2014 года в 15 часов 00 минут в здании администрации Москакасинского сельского поселения, по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, деревня Москакасы, улица Главная, дом 54 (проект прилагается).

2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию в районной газете "Знамя победы".

**Глава Москакасинского сельского поселения**
**А.Н. МАТРОСОВ.**

Проект муниципального правового акта

**О ходатайстве перед Кабинетом Министров Чувашской Республики о переводе земель сельскохозяйственного назначения в другие категории земель**

В соответствии со ст. 8 Земельного кодекса Российской Федерации, Федеральным законом от 21 декабря 2004 года № 172-ФЗ "О переводе земель или земельных участков из одной категории в другую", постановлением Кабинета Министров Чувашской Республики от 21 июня 2005 года № 152 "О переводе земель или земельных участков из одной категории в другую", администрация Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики п о с т а н о в л я е т :

1. Ходатайствовать перед Кабинетом Министров Чувашской Республики осуществить перевод земельного участка, находящегося в собственности Краснова Валериана Семеновича, расположенного на территории Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, площадью 71874 кв.м. с кадастровым номером 21:17:0000000:4993, из категории "земли сельскохозяйственного назначения" в категорию "земли промышленности, энергетики, транспорта, связи, радиовещания, телевидения, информатики, земли для обеспечения космической деятельности, земли обороны, безопасности и земли иного специального назначения" для размещения объектов придорожного сервиса.

С предложениями по проекту муниципального правового акта "Об изменении разрешенного использования земельного участка" обращаться в администрацию Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 02.10.2014 года до 15-00 часов.

***

**Организация реализует: гравмассу (ОПГС), щебень различных фракций. Без посредников. Низкие цены. Шешкарская пристань, Моргаушский район. Тел.: 8-927-995-07-51, 8-937-384-06-50. 17-28.**

***

**Продаем керамблоки, гравмассу, цемент, кирпич, ж/б изделия. Услуги манипулятора.**
**Тел.: 8-903-389-90-38. 7-8.**

***

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăх туянатпăр.**
**Тел.: 8-987-665-02-13. 7-10.**

***

**Продаю трехкомнатную квартиру в с. Моргауши на 3 этаже трехэтажного кирпичного дома, общей площадью 64,7 кв. м. Имеются 2 балкона, 2 подвала, сарай, частичный ремонт. Цена 1,9 млн. руб. Тел.: 8-937-016-51-53, звонить в любое время. 2-2.**

***

**Требуются работники в с. Акрамово. Работа на производстве. Полный день, работа на территории работодателя. Тел.: 8-927-666-71-72. 2-5.**

***

**Продаю трактор Т-40 А. Имеется прицеп, плуг, косилка, окучник. Цена договорная.**
**Тел.: 8-961-345-60-06. Юра.**

***

**Продается двухкомнатная квартира в с. Моргауши по ул. Ленина. В квартире имеется подвал и гараж при доме. Цена 1750000 руб.**
**Тел.: 8-952-024-62-25, 8-952-024-60-56. 1-2.**

***

**Продается корова черно-белой масти с ожидаемым 8 отелом в апреле.**
**Тел.: 8-919-665-15-86, 8-987-736-24-35.**

# Стартра – "çăлтăрсемпе" пěрле

**"Наци кросě"**


Пъедестал çинче – ветерансем.

Иртнě вырсарни кун Пěтěм Раççейри "Наци кросě" чупу кунěнче Муркашри стадионта чăн-чăн спорт уявě пулса иртрě. Тин кăна ура çине çирěп тăма вěреннě ачаран пуçласа 72 çулхи ветерансемпе пěрле стартра пирěн районтан тухнă паллă спортсменсене те курма май пулчě: Раççей тава тивěçлě спорт маçтăрěсем Вера Соколовăпа (хăвăрт утасси) Татьяна Моисеева (биатлон), хăвăрт утассипе тěнче класлă спорт маçтăрěсем Петр Трофимовпа Александр Яргунькин, спорт маçтăрě Василий Трофимов тренер-преподаватель.

Муркашри искусство шкулěнче хушма пěлӳ илекен ачасен хаваслă ташшисем пурне те сцена патне йыхравларěç. Чылайăн пухăннăмěн стадиона. Шкул ачисемпе пěрлех ача сачěсене çӳрекенсем те йышлă пулни тӳрех куçа курăнчě.

Шăпах ачалăхран спортпа туслашмалла. Çакна валли вара пирěн районта условисем çителěклě.

– Халě ěçлекен спортзалсемпе, тӳрем площадкăсемпе, сооруженисемпе пěрлех Муркашри шкула хирěç нумай функциллě спорт площадки те кěçех хута каймалла, – пěлтерчě хăйěн салам сăмахěнче район администрацийěн пуçлăхě Ростислав Тимофеев.

Çакăнпа пěрлех кашни тăваттăмěш шкул ачи тěрлě секцие çӳренине, районта пурăнакансен 34 процентне яхăн массăллă спортпа физкультурăра активлă пулнине те палăртрě вăл. "Наци кросне" килсе çитнě спортсменсенчен тěслěх илме сěнчě.


Тăвалла хăпарма йывăртарах пулчě.

– Пысăк спортри «çăлтăрсем» çакăн пек ăмăртусенче çуралаççě, – аса илтерчě вăл.

Çамах май "Солнышко" тата "Путене" ача сачěсенчи воспитательсем йышлăччě. Ачасене кашни утăмрах ырă тěслěх кăтартмаллине асра тытаççě вěсем.

Ырă тěслěхне ертӳçěсем те кăтартрěç: Р. Тимофеевпа тата В. Петровпа пěрле старта районти нумай ертӳçě тухрě. Вěсен йышěнче район администрацийěн пай ертӳçисем, ял тăрăхěсен пуçлăхěсем, шкул директорěсем тата ыттисем те. Стадионта икě çаврăм чупса çаврăнчěç вěсем.

– Чупу мěнлерех пулчě? – кăсăклантăм Вениамин Петровран.

– Питě лайăх, питě лайăх. Ачасене ытларах явăçтармалла пирěн, хамăрăн тěслěхпе те, – пěлтерчě хăйěн шухăшне Вениамин Иванович.

Хыççăн вара чăн-чăн хěрӳ тупăшу пуçланчě. Тěрлě ӳсěмре ăмăртрěç ачасем. Ачасем йышлă пулнăран вăтам тата тěп шкулсен чупăвне уйăрма та тиврě судьясен. Вěсен вара ку ăмăртура ěçě чăн та çителěклех пулчě.

Чи массăллă старт, Раççейри ытти çěрти пекех, пирěн патра та 12 сехетре пулчě – 60 ытла арçын ача стартран ыткăнчě. 1 çухрăм тăршшě дистанцие çăмăллăнах парăнтарчěç вěсем.


Пирěн районăн пысăк спортри «çăлтăрěсем».

Чăваш Республикин Гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвěсемпе ěçлекен патшалăх комитечěн ертӳçи Вениамин Петров та, Вера Соколова спортсменка та Муркашсене ăнăçлă старт сунчěç.

Тупăшу чи пěчěккисенчен пуçланчě. Стадионта 250 метр чупса ăмăртрěç вěсем. Никам та ывăнтăм тесе калакан пулмарě, пурте хаваслă, пурте савăнăçлă – вěсемпе пěрле паллă спортсменсем те старта тухрěç вěт-ха. Нумайăшěн çак старт район шайěнчи пěрремěш старт пулчě. Акă "Малыш" ача садне çӳрекен Максим Аверкиев та пěрремěш хут ăмăртăва тухнă. "Манăн анне спортпа туслă, эпě те тухрăм, манăн аппа та паян кунта", – тет вăл именерех.

Шăпăрлансенчен мала тухакансем Оля Старцевăпа Станислав Петров пулчěç. Ăмăртăва хутшăннă кашни ача ятарлă значока тивěçрě. Кун пек хавхалантарнине воспитательсем те ырларěç, ачасен хавхалантарăвě куç умěнче пулни малалла та лайăх


Акă вăл – çěнтерӳ!

Ӳсěм аслăрах пулнине кура дистанци те "ӳссе пычě". Уншăн вара никамăн та кăмăл пăсăлмарě. Сăнама тата мěн тери интереслě пулчě. Сăртлă вырăнта трасса пěтěмпех алă тупанě çинчи пек курăнать. Кам малта пыни, пěр-пěринчен иртсе кайни ачасемпе çамрăксен хатěрленěвне курма та май пачě. Çын кашни кун тренировкăна тухни, спортра пысăк çитěнӳсем тăвас тěллевли те палăрчě кунта. Спортсменсен ăсталăхне тата чупу техникине сăнама питě кăмăллă пулчě – ырă ăмсану та çуралчě.

Ěç коллективěсем те, ветерансем те чупăва хаваспах тухнă.

– Пирěн ăмăртас кăмăл пысăк. Çанталăкě те пире валлиех – ăшă, хěвеллě, – теççě спорт ветеранěсем Михаил Романовпа Аверкий Васильев.

Чи кěçěн хутшăнакансем Милана Петровăпа Ангелина Архипова пулчěç, чи асли – 73 çула пуснă Аверкий Васильев. Вěсене пурне те уйрăммăн чысларěç.

Çак чупу шайěнче В. Егорова Олимп чемпионкин парнисене çěнсе илессишěн хěрӳ тупăшу пулчě. Унăн çěнтерӳçисем – Муркашри вăтам шкулăн, Шетмěпуçěнчи тěп шкулăн тата Çатракасси ял тăрăхěн командисем медаль-дипломсемпе пěрлех кубоксене те тивěçрěç. Уйрăм стартсенче çаксем палăрчěç: 2005–2007 çулсенче çуралнисен ӳсěмěнче Стас Лоцмановпа Оксана Алексеева çěнтерчěç; 2002 çулта çуралнисен тата кěçěнреххисен ӳсěмěнче – Екатерина Старцева тата Артем Кузнецов; 2000–2001 çулсенче çуралнисен ӳсěмěнче – Роман Куликов (чи хыçалтине пěр çаврăм майлах хăварма пултарчě) тата Люда Семеновская; 1998–1999 çулсенче çуралнă яшсенчен – Кирилл Поствайкин, хěрсенчен – Анна Милютина.

Хěрарăмсен чупăвěнче Ольга Терентьева палăрчě, арçынсен йышěнче – Александр Ораин.

Ветерансем те ачасем пекех хаваслă кăмăл-туйăмли сисěнче. Вěсенчен Раиса Куликова культура ěçченěпе Мари Эл республикинчен килнě Ипполит Лобанов мала тухрěç.

Спорт уявěн кунě чăннипех хаваслă та массăллă иртрě.

**Н. НИКОЛАЕВА.**


Ертӳçěсенчен тěслěх илме май пур.

# Пĕлтерӳсем. Объявления

**ВОССТАНОВЛЕНИЕ СРОКА ПРИНЯТИЯ НАСЛЕДСТВА (ЧТО ДЕЛАТЬ, ЕСЛИ ПРОПУЩЕН СРОК ВСТУПЛЕНИЯ В НАСЛЕДСТВО)**

Для вступления в права наследования наследник или наследники (если их несколько) должны его принять. Общий срок принятия наследства – шесть месяцев со дня его открытия (п. 1 ст. 1154 ГК РФ).

Закреплено, что наследник считается принявшим наследство, если он совершил действия, свидетельствующие о фактическом принятии наследства (п. 2 ст. 1153 ГК РФ). Необходимо подтвердить факт принятия наследства, т.е. определить, что наследство было своевременно принято путем совершения действий, свидетельствующих о фактическом его принятии.

Доказательствами могут быть: справки ЖЭО, органов местного самоуправления или ОВД о вашем проживании в наследуемом жилом помещении; справки об использовании вами имущества, входящего в состав наследства; квитанции об уплате налогов, страховых, коммунальных и других платежей в отношении наследуемого имущества.

Для получения свидетельства о наследстве необходимо обратиться к нотариусу и написать заявление о выдаче свидетельства о праве на наследство и приложить вышеуказанные документы. Свидетельство о праве на наследство получите без обращения в суд.

При пропуске фактического срока принятия наследства этот срок можно восстановить обратившись в суд, при условии, что наследник не знал и не должен был знать об открытии наследства или пропустил этот срок по другим уважительным причинам.

**С возникающими вопросами можете обратиться в ООО "Виктория".**

**Наш адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119; г. Чебоксары, ул. Водопроводная, д. 22, единые тел.: 446-448, 212-377.**

**В ООО «Росметалл» требуются МЕНЕДЖЕР по продаже со знанием 1С, зарплата 20 тыс. руб., РАЗНОРАБОЧИЕ, ОХРАННИК. Тел.: 8-927-667-22-32, 8-987-123-34-44. 8(83541)66-3-84. 1-5.**

**26 сентября в РДК с. Моргауши с 9 ч. до 16 ч. состоится продажа ОБУВИ из натуральной кожи производства г. Ульяновск и Белоруссии.**

**Приглашаются на работу водители с личным автотранспортом длиной от 4 м и грузоподъемностью от 2 тонн для работы в сфере грузоперевозок по России (Москва, Н. Новгород, Чебоксары, Казань, Йошкар-Ола). Подробности по тел.: 8-987-129-56-50.**




**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ. АКЦИЯ!!! Снижение цен! ТРИКОЛОР, ТЕЛЕКАРТА от 3000 руб. Обмен старых приемников на новые + поправка антенны бесплатно! Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30. 5-10.**

5-13.



**ТЕПЛИЦЫ от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т.д. Телефоны: 8-917-651-00-76, 8-927-858-28-79.**

1-10. компания **немецкие ОКНА И ДВЕРИ**
• замер • доставка (бесплатно) • установка под ключ
всего от 2900 руб. кв.м.
**8(927)844-78-11**

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ ТРИКОЛОР. ТЕЛЕКАРТА - от 3000 руб. ОБМЕН. ГАРАНТИЯ. Тел.: 8-905-345-77-19. 16-20.**

**Продаем: доски 25–50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 1-10.**



**КТО ЗНАЕТ СЧЕТ ДЕНЬГАМ И ВРЕМЕНИ – ТОТ ВОВРЕМЯ ДЕЛАЕТ ПОКУПКИ!**

В преддверии нового учебного года проводится акция по займам

**«НА ПОДГОТОВКУ К ШКОЛЕ»**

*Акция действует с 15 июля по 30 сентября 2014 года.*

**Подробнее об условиях в офисах кооператива по тел.**

**62-6-86, 8-900-333-0001**

**Кредитный потребительский кооператив “Содружество”**

**с.Моргауши, ул.50 лет Октября, 23**

7-8. СОДРУЖЕСТВО *для пайщиков кооператива*

**Кивелнĕ электропроводка – пушар хăрушлăхĕ, кайран вара чавса çывăх та çыртма çук. Ялти çуртсенче, хваттерсенче кивелнĕ электропроводкăна, счетчиксене çĕнĕрен улăштаратпăр. Материалĕ хаклă мар. Тел.: 8-902-661-70-57, 8-937-015-35-40, 62-1-37. 6-10.**

**ПРОДАЕМ ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ: 25х100; 25х110; 25х120; 25х130; 25х150; 25х200; 50х120; 50х150; 50х180; 50х200. БРУСЬЯ: 100х100; 100х150; 100х200; 150х150; 150х200. БЛОКИ, КИРПИЧИ, ЦЕМЕНТ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 5-10.**

**Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 65-68.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Тел.: 8-927-667-40-92. 15-15.**

**26 СЕНТЯБРЯ 2014 года на центральном рынке с. Моргауши ОАО «Плодопитомник» г. Лысково реализует саженцы плодово-ягодных и декоративных культур, роз, хвойников. Весь товар сертифицирован. Цены от производителя. Тел.: 8(83149)5-42-93.**

**28 СЕНТЯБРЯ 2014 года на центральном рынке с. Б. Сундырь ОАО «Плодопитомник» г. Лысково реализует саженцы плодово-ягодных и декоративных культур, роз, хвойников. Весь товар сертифицирован. Цены от производителя. Тел.: 8(83149)5-42-93.**




Рекомендованная цена изделия: 6562 руб.

**Не верите, посчитайте сами на сайте www.ok-schern.ru Тел.: 8-937-375-88-55**

2-2.

# Павел Афиногенович КРЫСИН



Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ, орденсемпе медальсен кавалерĕ, СССР журналисчĕсен союзĕн членĕ, Раççей Писательсен союзĕн членĕ, Чăваш АССР телевиденипе радиовещани патшалăх комитечĕн председателĕнче ĕçленĕ паллă ентеш Павел Афиногенович Крысин пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ.

Павел Афиногенович 1923 çулхи январĕн 25-мĕшĕнче Шупашкар уесĕн (халĕ Муркаш районĕ) Пăсăрман ялĕнче çуралнă. 1942 çулта Сĕнтĕрвăрринчи çĕр йĕркелĕвĕпе мелиораци техникумне, 1950 çулта Хусанти юридици институтне, 1960 çулта КПСС Тĕп Комитечĕн партин аслă шкулне вĕренсе пĕтернĕ.

1950 – 1953 çулсенче КПСС Чăваш обкомĕнче ĕçленĕ. 1953 – 1954 çулсенче Чăваш АССР Прокуратурин сотрудникĕ пулса тăрăшнă.

1954 çулта ăна республикăра тухса тăракан "Коммунизм ялавĕ" (халĕ "Хыпар") хаçат редакторĕн çумĕ пулма çирĕплетнĕ. Ку должноçре вăл 1965 çулччен вăй хунă.

1965 çулта вара ăна тата ответлăрах ĕç – Чăваш АССР телевиденипе радиовещани патшалăх комитетне ертсе пыма шаннă. 19 çул хушши кунта вăл ответлăха туйса тăрăшнă.

Каярахпа "Агитатор блокночĕ" журналăн ответлă секретарĕ те пулнă, Чăваш АССР журналистсен союзĕн правленийĕн председателĕ пулса та тимленĕ.

Павел Афиногенович – Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ. 1942 – 1945 çулсенче вăл Çурçĕр Кавказра, Украинăн 2-мĕш, Забайкальски фрончĕсенче Тăван çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн нимĕç эшкерĕсемпе çапăçнă.

1962 – 1984 çулсенче ăна темиçе созывра та Шупашкар хула канашĕн депутатне суйланă, 1965 – 1983 çулсенче вăл КПСС Чăваш обкомĕн членĕ, 1975 – 1984 çулсенче СССР журналистсен союзĕн правленийĕн членĕ, Чăваш АССР Правительствин членĕ пулнă.

Павел Афиногенович – сатира жанрĕпе çырнă чылай калавсемпе фельетонсен авторĕ. Вĕсенчен чи паллăраххисем: "Тем те пулать пурнăçра", "Хăвилософ", "Хушаматлă алăк". Унăн сценарийĕпе Чăваш телестудийĕ "Республика биографийĕ" серипе 8 киноочерк ӳкернĕ. Уйрăм калавĕсене вырăсла, украинла, венгрла, туркменла куçарнă.

1978 çулта ăна Чăваш АССР культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕн хисеплĕ ятне панă, 1978 çулта республикăри журналистсен С. Элкер ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ пулса тăнă, совет телевиденийĕпе радиовещанийĕн отличникĕ.

Хăйĕн ĕçри пултарулăхне тата Аслă Отечественнăй вăрçăри хастарлăхне кура тĕрлĕ орденсемпе медальсене тивĕçнĕ. Вĕсен шутĕнче Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ, Аслă Отечественнăй вăрçăн 2-мĕш степень орденĕ, "Хисеп палли" орден, "Çапăçури хастарлăхшăн" медаль, "1941 – 1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçăра Германие çĕнтернĕшĕн" медаль, "Японие çĕнтернĕшĕн" медаль, Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотисем, "Хастар ĕçшĕн. В.И. Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнине палăртса" медаль тата ыттисем.

Павел Афиногенович хăйĕн ĕç пурнăçĕн ытларах пайне журналистикăна панă. Вăл хăйĕн ĕçĕнче яланах профессионал пулнă, пурнăçа юратнă, малашлăх тĕллевĕсемпе пурăннă.

Павел Афиногенович Крысинăн çутă сăнарĕ тата ун пирки ăшшăн аса илнисем унпа пĕрле ĕçленисен, ăна пĕлнисен, тус-юлташĕсен, тăванĕсемпе çывăх çыннисен, пирĕн чĕресенче яланлăхах упранĕç.

**Районти "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçат редакцийĕн коллективĕ.**

***

**Март уйăхĕнче çиччĕмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-841-25-29.**

***

**Ноябрь уйăхĕнче пăруламалли хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-927-848-40-12.**

***

**Март уйăхĕнче пăруламалли хĕрлĕ-шурă, апрелĕн 1-мĕшĕнче пăруламалли хура-шурă тынашкисем тата октябрь уйăхĕнче пăрланламалли романовски аратлă сурăхсем сутатпăр. Тел.: 8-927-846-65-97.**

***

**Продается щитовой жилой дом, обложенный кирпичом, общей площадью 59,1 кв. м., газовое отопление. Земельный участок, общая площадь 2500 кв. м. На участке имеются кирпичные строения: баня, сарай, гараж. Цена 1350 тыс. руб. Торг. Тел.: 8-927-669-96-13. Ленар.**

***

**Продаю земельный участок на республиканской трассе в д. Нискасы площадью 18 соток для строительства зданий и сооружений. Тел.: 446-448.**

***

**Продаю: кирпич керамический и силикатный, керамблоки пропаренные, кольца. Недорого, доставка. Тел.: 8-962-321-36-80. 4-8.**

***

**Продаю зимние сорта яблок. Тел.: 8-927-855-82-01.**

## Прогноз погоды

| | среда 24 сентября | | | | четверг 25 сентября | | | | пятница 26 сентября | | | | суббота 27 сентября | | | | воскресенье 28 сентября | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 |
| Облачность, % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки, мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура, °С | +6 | +14 | +19 | +11 | +10 | +14 | +14 | +10 | +9 | +13 | +13 | +10 | +8 | +12 | +15 | +10 | +10 | +12 | +13 |
| Давление, мм | 745 | 744 | 742 | 741 | 742 | 741 | 741 | 743 | 745 | 746 | 747 | 748 | 750 | 750 | 749 | 748 | 749 | 748 | 747 |
| Влажность, % | 83 | 63 | 40 | 60 | 64 | 63 | 88 | 89 | 88 | 85 | 82 | **92** | 89 | 81 | 59 | 77 | 76 | **93** | **92** |
| Ветер, м/с | 3 | 5 | 6 | 5 | 5 | 4 | 5 | 3 | 3 | 4 | 4 | 3 | 3 | 3 | 2 | 3 | 3 | 3 | 2 |
| | Ю-В | В | В | В | В | Ю-В | Ю-В | В | С-В | В | В | В | В | Ю-В | Ю | Ю-В | Ю-В | Ю | Ю |
| Солнце восход / заход | | 06:42 | 18:46 | | | 06:44 | 18:44 | | | 06:46 | 18:41 | | | 06:48 | 18:38 | | 06:50 | 18:36 | |
| Луна восход / заход | | 06:45 | 18:36 | | | 07:54 | 18:56 | | | 09:03 | 19:18 | | | 10:14 | 19:43 | | 11:24 | 20:14 | |

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**

**Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви**

**ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,**
**пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă служба Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.**

**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**

**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.**
**Пичете панă 23.09.2014 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4706.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.